

# ÇУЛПУÇĂН АЧА ЧУХНЕХИ ПУРНĂÇĔ

Чăвашгосиздат ◆ 1940

Чув.
1-108а

3кп1
К С89

*Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!*

# ÇУЛПУÇĂН ÇАМРĂК ЧУХНЕХИ ПУРНĂÇĔ

ЗАКАВКАЗЬЕРИ
ВАТĂ РАБОЧИСЕН
АСАИЛĔВĔСЕМ

*В. А. Долгов*
*куçарнă*

Инв. № 1167.

Гос. Публичная Библиотека в Ленинграде

ЧĂВАШ АССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ

ШУПАШКАР — 1939

ПРОВЕРЕНО
20 07

Нх 28936-чув.

Республиканская
библиотека
им. М. Горького
Чувашской АССР

*Д. Гогохия*

# ÇАК КУНСЕМ ĔМĔРЛĔХЕХ АСĂМРА ЮЛЧĔÇ

Гори хулин кăнтăрпа хĕвеланăç енĕсенче Кура тата Лиахва шывсем юхса выртаççĕ. Гори йĕритавра панулми-çырла сачĕсем пур. Хулара авалхи крепоçăн—вăтам ĕмĕр памятникĕн—ишĕлчĕкĕсем çӳлелле кăнратса тăраççĕ.

Кивĕ Гори хулинче сакăр пин çын таран халăх пулнă, чиркӳсем, лавкасем, духансем нумай пулнă тата унчухнехи пĕтĕм уезд валли тăватă шкул: хулари тăватклаclă училище, духовнăй тăватклаclă училище, учительсен семинарийĕ тата хĕрарăмсен прогимназийĕ пулнă.

Çак хулара, Виссарион Джугашвили сапожник çемьинче, 1879 çулта арçын ача çуралнă, ăна Иосиф тесе ят панă.

1890 çул, Гори хулинчи духовнăй училищăна кĕрсен, эпĕ вунпĕр çулти Иосиф Джугашвилие малтанхи хут тĕл пултăм.

Предметсене пире вырăсла чĕлхепе вĕрентетчĕç, эрнере икĕ хут çеç грузинла чĕлхе вĕрентетчĕç.

Эпĕ, Мингрели çынĕ пулнăран, грузин сăмахĕсене таса калаймастăм. Çакă вара учениксемшĕн манран кулма сăлтав пулса тăчĕ. Иосиф йăлтах урăхла: вăл мана пулăшма пуçларĕ. Вăл, хăйне мăнаçа хуманскер тата сисĕмлĕскер, ман патăма пычĕ те:

— Ну, давай, эпĕ санран мингрелсен чĕлхине вĕренем, а эсĕ манран грузинсен чĕлхине вĕрен,—терĕ.

Юлташăн çавнашкал кăмăлĕ мана питех те савăнтарчĕ.

Пĕр мăнаççăрлăхпа кăна мар палăратчĕ Иосиф. Хăйĕн пысăк пултарулăхĕсемпе тата ĕçе юратнипе палăрса тăратчĕ вăл учениксем хушшинче.

Вăл яланах хăйне ретлĕ тытатчĕ, тумаллине çине тăрсах тăватчĕ, алхаснине тата иртĕнсе хăтланнине вăл юратмастчĕ. Занятисем пĕтсен, киле кайма васкатчĕ, вăл яланах кĕнекесем вуласа ларнине кураттăмăр.

Манăн аслă пичче Виссарион Гогохия, мана хăйĕн хваттерне пурăнма янăскер, Кипшидзе çуртне куçрĕ. Çакăнтах, килхушшинчи çуртра, Иосиф хăйĕн амăшĕпе пурăнатчĕ.

Вĕсен комнати тăхăр тваткăл аршăнтан ытла марччĕ, кухня патĕнчеччĕ. Вĕсен комнатине тӳрех килхушшинчен кĕмелеччĕ, пĕр картлашка та çукчĕ. Урайне кирпĕчсем сарса тунă, пĕчĕк чӳрече витĕр çутă сахал кĕретчĕ. Вĕсен комнатинчи пĕтĕм обстановка çакăччĕ: пĕчĕк сĕтел, табуретка тата нар евĕрлĕ, „чилопи" тенĕскерпе—улăм цыновкăпа—витнĕ сарлака тахтă.

Иосиф амăшĕ, кĕпесем çуса тата Гори хулинчи пуян çынсем патĕнче çăкăр пĕçерсе, кăшт укçа-тенкĕ тупатчĕ. Комнатăшăн уйăхне тенкĕ çурă тӳлемелле пулнă, анчах çак тенкĕ çурă укçана пухма та яланах май килмен.

Амăшĕн ĕçри йывăр пурнăçĕ, чухăнлăх Иосиф кăмăлĕнче те палăратчĕ. Вăл пуян пурăнакан çынсем патне кĕме юратмастчĕ. Эпĕ ун патĕнче кунне темиçе хут пулнă пулсан та, вăл ман патăма сайра-хутра кăна хăпаратчĕ, мĕншĕн тесен манăн аслă пичче, унчухнехи вăхăтпа шутласан, пуян пурăнатчĕ.

Иосиф ашшĕ—Виссарион—пĕтĕм куна ĕçре irттеретчĕ, атă-пушмак çĕлетчĕ, юсатчĕ.

Иосиф мĕн тума тытнине пурне те таран та тĕплĕ ăнланса илетчĕ. Уроксем хатĕрленĕ çĕре унăн вăхăт сахал каятчĕ. Вăл, педагога тимлĕн итлесе, урока лайăх ăнланатчĕ, лайăх астума пултарнăран вĕреннине çĕнĕрен пăхса тухма та кирлĕ марччĕ.

Занятисенчен ирĕк вăхăтра кĕнекесем вулатчĕ. Вăл шкул библиотекинче пулнă кĕнекесене пурне те—грузин тата вырăс классикĕсен произведенийĕсене—вуласа тухнă,—вăл хăйĕн аталанăвĕпе тата пĕлĕвĕсемпе хăйĕн шкулти юлташĕсенчен нумай малта тăратчĕ.

Çакна пула ĕнтĕ ăна çеç кашни уйăхрах стипенди памалла турĕç.

Гори хулинчи духовнăй училищăран эпир 1894 çулта вĕренсе тухрăмăр. Кăларнă чухнехи экзаменсенче Иосиф уйрăмăнах палăрчĕ. Пур предметсемпе те пиллĕкшер лартнă аттестатсăр пуçне, ăна похвальнăй лист пачĕç, унчухнехи вăхăтшăн вăл питех те пысăк событи пулса тăрать, мĕншĕн тесен унăн ашшĕ духовенство таврашĕнчен тухнă çын пулман, атă-пушмак ремеслипе пурăннă.

1894 çулхи кĕркуннех эпир Тифлис хулине килтĕмĕр,—хамăр пурнăçра пирвайхи хут пысăк хулана лекрĕмĕр.

Пире тăватă хутлă çуртри общежитин ытла та пысăк комнатисене илсе кĕртрĕç те çав



Сталин юлташ ҫуралнӑ Гори хулин пӗр пайӗ.

пысӑк комнатӑсенче ҫирӗмшер-вӑтӑршар ҫын вырнаҫтарчӗҫ. Ҫак ҫурт ӗнтӗ Тифлис хулинчи духовнӑй семинари пулчӗ.

Духовнӑй семинаринче пурнӑҫ пӗр тӗрлӗ те пӗр пек иртетчӗ. Ир ҫичӗ сехетре тӑраттӑмӑр. Малтан пире турра кӗлтума хушатчӗҫ, унтан эпир чей ӗҫеттӗмӗр, звонок хыҫҫӑн класа каяттӑмӑр. Дежурнӑй ученик „ҫӳлти аттемӗре" кӗлле вулатчӗ, занятисем вара перерывсемпе икӗ сехетчен пыратчӗҫ. Виҫӗ сехетре—кӑнтӑрлахи апат, каҫпа пилӗк сехетре—перекличка, ун хыҫҫӑн вара урама тухма хытах чаратчӗҫ.

Кайрантарахпа каҫхи кӗлле илсе каятчӗҫ, сакӑр сехетре чей ӗҫеттӗмӗр, унтан уроксем хатӗрлемешкӗн классем тӑрӑх саланаттӑмӑр, вунӑ сехетре койкӑсем ҫине ҫывӑрма каяттӑмӑр. Хамӑра эпир чул михӗре пурӑннӑ пек туяттӑмӑр.

Учениксен хӑйсен нушисене тата ыйтӑвӗсене сӳтсе-явмашкӑн права ҫукчӗ.

Мӗн вӗрентнине пурне те тӗкӗнмелле мар пек тӗрӗслӗх вырӑнне шутлатчӗҫ. Пурне те курса пӗлме тӑрӑшакан ҫынна хуйхӑ вара! Иккӗленӳсемшӗн вырӑн пулмалла мар. Ҫутҫанталӑкӑн ку е ҫав явленине, турӑ кӗнекисен страницисем ҫине ҫырнисене критиклесе каланине—турра хирӗҫ кайни тесе шутлатчӗҫ.



Гори хулинчи Сталин юлташ çуралнӑ тата ача чухне пурӑннӑ çурт.

Инспектор Абашидзе пансионерсене, вӗсен шухӑшӗсем мӗнлине, вӑхӑта вӗсем мӗнле irттернине чӑкӑлташса хытӑ асӑрхаса ҫӳретчӗ, кунсӑр пуҫне тата ухтарусем тӑватчӗ, пире тата пирӗн арчасене ухтаратчӗ.

Семинаринчи сывлӑш Иосиф Джугашвилишӗн йывӑрччӗ. Семинаринче вӗрентнӗ предметсем малта тӑракан ҫынна ҫителӗклӗ пулма пултарайманнине вӑл часах ӑнланчӗ.

Тӗнчере мӗн пулса пынисен никӗсӗсене пӗтӗмпех пӗлесшӗн ҫунатчӗ вӑл, вӗсен чи малтанхи сӑлтавӗсене шыраса тупатчӗ, семинаринчи курс ответ паман ыйтусене тӗплӗн ӑнланса илме тӑрӑшатчӗ.

Иосиф хӑйӗн вӑйне уроксем вӗреннӗ ҫӗре яма пӑрахрӗ, виҫҫӗсем илмелӗх ҫеҫ вӗренме пуҫларӗ—экзаменсем кӑна парса пултӑр. Вӑл хӑйӗн вӑхӑчӗпе вӑйне турӑ кӗнекисенчи юмахсене вӗренес тесе сая ямарӗ, вӑл ӗнтӗ пӗрремӗш класран пуҫласах тӗнрен ирӗклӗ литературӑпа, обществӑллӑ-экономикӑллӑ ыйтусемпе интересленме тытӑнчӗ. Ку тӗлӗшпе ӑна аслӑ классенчи учениксем пулӑшатчӗҫ. Вӗсем, пултаруллӑ тата пурне те пӗлме тӑрӑшакан Иосиф Джугашвили ҫинчен пӗлсен, уншала каласма тата ӑна журналсемпе кӗнекесем нама пуҫланӑ.

Пӗр ҫул хушшинче Иосиф политика тӗлӗшӗнчен питех те нумай ӳссе ҫитӗнчӗ—иккӗ-

мĕш класра вĕреннĕ чухне вара семинаринчи юлташĕсен ушкăнне ертсе пыракан пулчĕ.

Иосиф кружок ĕçĕсен планне хăй тĕллĕнех çырса пирĕнпе калаçусем туса ирттеретчĕ. Анчах та семинаринче кружока ертсе пыма май çукпа пĕрехчĕ. Инспектор Абашидзе хытă асăрхатчĕ. Вăл таçта темĕскер пулнине, çамрăксем, турă кĕнекисене вуланисĕр пуçне, тата урах кĕнекесене вуласа, урăх ĕçсем тунине сиснĕ, пирĕн вара пухăнмалли вырăн çинчен шухăшламалла пулчĕ.

Иосиф хушнипе Давидов тăвĕ патĕнче уйăхне пилĕк тенкĕ парса комната илтĕмĕр. Эпир унта эрнере пĕрре, хăш чухне эрнере икĕ хут, кăнтăрлахи апат хыççăн, перекличка пуличчен, вăрттăн пухăнаттăмăр.

Иосиф пансионта пурăнатчĕ, укçа унăн çукчĕ, эпир хамăр атте-аннесенчен посылкăсем тата пĕчĕк расходсем валли укçа илеттĕмĕр. Çак укçасен шутĕнчен комнатăшăн тӳлеттĕмĕр.

Кружок членĕсене Иосиф хăй, кам шанчăклă е шанчăклă мар пулни тăрăх тата вăрттăн ĕçлеме пултарни тăрăх, суйласа пухрĕ.

Семинаристсем хушшинче доносчиксем те пулнă, вĕсем учениксен, пуринчен ытла, Иосиф Джугашвили шухăш-камăлĕсем тата ĕçĕсем çинчен инспектор Абашидзене пĕлтерсе тăнă.

Кружокра Иосиф ћире Игнатий Ниношвили произведенийӗсене вуласа паратчӗ, Дарвинӑн ҫын мӗнле пулса кайни ҫинчен калакан теорине ӑнлантарса паратчӗ, ҫулталӑк вӗҫнелле вара эпир политикӑллӑ экономи тата Маркспа Энгельс ҫырнӑ кӗнекесен отрывокӗсене вулама пуҫларӑмӑр.

Эпир ҫавӑн пекех тата „Квали"[1] хаҫатра пулнӑ хыпарсемпе дискуссисене вуласа пыраттӑмӑр. Иосифа ыйтусем параттӑмӑр, вӑл пире пурин ҫинчен те ӑнланмалла, уҫҫӑн, лайӑх каласа паратчӗ.

Маркспа Энгельс шухӑшӗсене Иосиф сӑмахпа пропагандӑланипех чарӑнмастчӗ. Вӑл ученикссен алӑпа ҫырса, грузинла чӗлхепе кӑларакан журналне организацилесе, ӑна редакцилесе кӑларатчӗ, унта вӑл пӗтӗм тавлашуллӑ ыйтусене, кружокра тата „Квали" хаҫат страницисенче сӳтсе-яваканскерсене, ҫутатса паратчӗ.

Пирӗн семинари журналӗ вӑтӑр страницӑллӑ

---

[1] „Квали" („Борозда")—грузинла чӗлхепе эрнере пӗрре тухса тӑнӑ хаҫат. 1893 ҫулта либералла-националистла орган пулнӑ, Г. Церетели редакцилленипе тухса тӑнӑ. 1896 ҫулта ӑна нумайрахӑш „Месаме-Даси" ушкӑн (Н. Жордания тата ыттисем те) сутӑн илнӗ. РСДРП-ра раскол пулнӑ хыҫҫӑн „Квали" Грузири меньшевиксен органӗ пулса тӑнӑ. Вӑл 1904 ҫула ҫитиччен тухса тӑнӑ.



Сталин юлташа духовнăй семинарирен кăларса яни.

тетрадь çинче тухатчĕ. Журнал уйăхра икĕ хут тухатчĕ, вăл алăран алла çӳретчĕ.

Çак тапхăрта Иосиф пĕтĕмпех политикăлла литература вулас ĕçе пикенчĕ, анчах кĕнекесем илме унăн укçа пулман. Ăна каллех вăл пит те лайăх астума пултарни пулăшать. Вăл букинистсем патне каятчĕ, хăйне интереслекен кĕнекене илсе чарăнатчĕ, ăна уçатчĕ те, букинист кĕнеке илекенсемпе тăрмашнă вăхăтра, вуласа тухса хăйне кирлĕ вырăнсене вĕренсе илетчĕ.

Семинаристсем хушшинче революциллĕ шухăш-кăмăлсем ӳссе çирĕпленсех пычĕç. Тавлашусемпе диспутсем кулленхи япаласем пулса тăчĕç. Алăпа çырнă журнал, пичетленсе тухнă политикăллă литература тата „Квали“ хаçат кружок членĕсен кĕсйисене тулатчĕ.

Анчах çаксене пурне те асăрхамасăр ирттермерĕç. Инспектор Абашидзе сыхласа çӳрессине вăйлатрĕ, Абашидзе таврашĕсем йĕрленинчен пытанса çӳреме пирĕншĕн йывăрланчĕ.

Пĕррехинче каçпа, эпир уроксем хатĕрленĕ чухне, класа кĕтмен-çĕртенех Абашидзе пырса кĕчĕ. Арчасенче нимĕнле киревсĕр япала та тупайман хыççăн, вăл учениксене ухтарма тытăнчĕ. Çак эрнерех, тĕплĕн ухтарнă хыççăн, Иосиф патĕнче инспектор

тĕтрадь тупнă, ун çине Иосиф алăпа çырнă журнал валли статья çырнă пулнă.

Абашидзе часах семинари правленийĕн заседанийĕнче материалпа тухрĕ. Çакăн хыççăн вара поведенипе двойка илтĕмĕр тата юлашки хут асăрхаттарчĕç.

Кружокра туса ирттерекен калаçусемпе яланах пулса пыракан дискуссисем пирĕн семинаринчи занятисенче палăратчĕç. Çапах та Иосиф, нумай вăй пĕтермесĕрех, тепĕр класа çăмăллăн куçрĕ. Анчах ĕç ăнăçлă пулни семинари начальствине улталаймарĕ. Талантлă, лайăх пĕлекен, калама çук лайăх астума пултаракан Джугашвили мĕншĕн „тройка" илмелĕх кăна вĕреннине тискер монах Абашидзе тавçăрса иле пуçларĕ.

Çак ыйтăва вăл семинари правленийĕн заседанийĕнче çĕнĕрен хускатрĕ, эпир политикăллă ыйтусене юратса вĕреннине кăтартса пачĕ, çак ĕçре Джугашвили тĕп роль йышăнса тăнине каласа пачĕ те ăна семинаринчен кăларасси çинчен постановлени йышăнтарчĕ.

Çакăн пек пĕтрĕ эпир шкулта пĕрле пурăнни, çакăн пек иртрĕç ача чухнехи, çамрăк чухнехи çулсем.

Иосиф Джугашвили семинаринчен дипломсăрах тухрĕ, анчах пурнăçа паллă, çирĕп ăнланнă шухăшсемпе тухрĕ. Вăл ĕнтĕ

çав пурнăçа çапса салатма тата улăштарса çĕнетме кирлине пĕлсе ăнланнă.

Кунçулăм мана каллех яла çитерсе пăрахрĕ. Атте вилчĕ, манăн вара ĕç шырамалла пулчĕ.

Иосиф Гори хулине таврăнмарĕ.

Вăл пĕтĕмпех революциллĕ ĕçе тытăнчĕ.

*Г. Глурджидзе*

# МАНМИ ÇУЛСЕМ

Эпĕ Гори хулинчи духовнăй училищăра вĕрентĕм, унтан Тифлисри духовнăй семинаринче вĕрентĕм, çак çулсенче ĕнтĕ Сталина тĕл пултăм.

Унăн тумтирне астăватăп, çав тумтирпе Иосиф Джугашвили хĕлле шкула пырса кĕчĕ. Унăн тăрăшса ĕçлекен амăшĕ, кĕпе-йĕмлĕх çĕлеме касса, кĕпе-йĕм çĕлесе тата кĕпе-йĕм çуса укçа-тенкĕ тупакансккер, ывăлне ăшă та типтерлĕ тумтир тăхăнтартма тăрăшатчĕ.

Иосиф кăвак пальто, атă, кĕççе шлепке, çыхса тунă алса тăхăннăччĕ. Мăйне сарлака хĕрлĕ шарфпа чĕркесе çыхнă. Килĕшетчĕ

28936-чув.
Республиканская библиотека им. М. Горького Чувашской АССР

пире унӑн йӑм-хӗрлӗ шарфӗ. Иосиф вӑтам пӳллӗ, ырхантарахчӗ. Шкула вӑл хӗрлӗ ҫицӑран ҫӗленӗ сумкине хулпуҫҫийӗ урлӑ ҫакса пыратчӗ. Утти—ҫирӗп, шанчӑклӑ, пӑхма—чӗррӗн пӑхать, пӗтӗмпех вӑл—ҫӑмӑл кӗлеткеллӗ, пурнӑҫа юратаканскер.

Малтанхи ҫулсенче, хатӗрленмелли отделенисенче, Иосиф отлично вӗренчӗ, малашне те унӑн пултарулӑхӗсем уҫӑлса сарӑлсах пычӗҫ,—вӑл малта пыракан ученикасенчен пӗри пулса тӑчӗ.

Шкул ҫумӗнче библиотека пурччӗ. Эпир ҫитӗнсе ҫитсен,—вулама юратакан пултӑмӑр. Начальство пире эпир юратман кӗнекесене паратчӗ, эпир вара вуламалли кӗнекесене Гори хулинче кӗнеке магазинӗ тытакан Арсен Каландадзе патӗнчен илеттӗмӗр. Каландадзе патӗнчен эпир Акакий Церетели, Илья Чавчавадзе, Р. Эристов тата ыттисем ҫырнӑ кӗнекесене, пире—тӗнчере темле урӑх событисем пулса иртни ҫинчен, шкул пирӗншӗн амаҫури анне пулни ҫинчен калакан кӗнекесене илеттӗмӗр.

Преподавательсенчен нумайӗшӗ пирӗн ҫине мӗнле пӑхни пире татах та ҫакна ӗнентерчӗ. Эпир вӗсенчен ютшӑнаттӑмӑр, вӗсенче ӑшӑ кӑмӑл курмастӑмӑр. Шкул пирӗнтен ирӗклӗ ҫынсем мар, чурасем тума тӑрӑшни пирӗншӗн паллӑччӗ.

Эпир уроксем хатĕрлеттĕмĕр, вĕренеттĕмĕр, анчах шкул стенисем хыçĕнче „темĕскер“ урăххи, унчухне хăйĕн сăн-йĕрĕсемпе пирĕншĕн паллăмарскер, анчах та кăмăллăскер, тупсăмне пĕлме ыйтаканскер—пытанса тăни пирĕн куç хыçне юлмарĕ...

Çав „темĕскере“ Иосиф ыттисенчен лайăхрах пĕлсе илетчĕ. Ăсăмăм улталамасть пулсан, çак эпĕ калаçса парас тенĕ калаçу Иосифпа эпир вунвиççĕре чухне пулса иртрĕ.

Çуллахи каникулсем вăхăтĕнче, тăван саларан—Бершуетирен—Гори хулине таврăнсан, эпĕ Иосиф патне кайрăм, эпир унпа урама уçăлса çӳреме тухрăмăр. Кура çинчи кĕпер урлă каçрăмăр, чугун çул урлă иртсе кайрăмăр та симĕс çеремлĕ вырăна çитсе лартăмăр.

Çамрăкскерсем, пурнăçа тутанса курманскерсем, эпир пĕтĕмĕшле темăсем тăрăх калаçма юрататтăмăр. Эпĕ турă çинчен калаçма пуçларăм. Иосиф мана итлерĕ те, пĕр минут шарламасăр тăнă хыççăн:

— Пĕлетĕн-и, пире улталаççĕ, турă çук...— тесе ответлерĕ.

Çак сăмахсем мана тĕлĕнтерчĕç. Кун пек сăмахсене эпĕ никамран та илтмен.

— Сосо, эсĕ мĕн калатăн?!

— Эпĕ сана пĕр кĕнеке вулама парам, вăл

кӗнеке тарӑх эсӗ тӗнчепе пӗтӗм пурнӑç йӑлтах урӑхла тытӑнса тӑнине тата турӑ çинчен калаçнисем пушӑ сӳпӗлтетӳ пулнине курӑн,— терӗ Иосиф.

— Мӗнле кӗнеке вӑл?—тесе интереслентӗм эпӗ.

— Дарвин. Обязательно вуласа тух,—вӗрентсе ответлерӗ Иосиф.

* * *

Гори хулинчи училище хыççӑн Иосиф Джугашвилие эпӗ Тифлисри духовнӑй семинаринче çӗнӗрен тӗл пултӑм. Çак училищӑри йӗрке пит те хытӑччӗ. Хаçат вулама та, театра кайма та юрамастчӗ. Каçпа пилӗк сехет хыççӑн урама тухма чаратчӗç. Вӗçӗмсӗрех кӗлӗсем: урок умӗн, ирхи апат умӗн, кӑнтӑрлахи апат умӗн, çывӑрас умӗн пулатчӗç. Шӑматкунсемпе вырсарникунсенче нумая пынипе ывӑнтаракан кӑнтӑрлахи кӗлӗсем пулса иртетчӗç. Вӗсем ӗнтӗ пире питех те йӑлӑхтарчӗç.

Вӗренекенсем хыççӑн преподавательсем асӑрхаса çӳретчӗç. Вӗренекенсене айӑплamалли мерӑсем çаксемчӗ: тулӑксӑр выговор, карцер (тӗттӗм комната), поведени енӗпе двойка, юлашкинчен, семинарирен кӑларса ярасси.

Иосиф „аякри“ кӗнекесене вулама юрататчӗ. Ун тавра юлташсем пухӑнатчӗҫ.

Хамӑра интереслентерекен ыйтусене лайӑхрах пӗлес тесе, эпир ҫак кӗнекесене вулаттӑмӑр: Липперт—„История культуры“ Лев Толстой—„Война и мир“, „Хозяин и работник“, „Крейцерова соната“, „Воскресенье“, ҫавнашкалах тата Писарев, Достоевский, Шекспир, Шиллер тата ыт. ҫырнӑ кӗнекесене те вулаттӑмӑр.

Хӑш чухне эпир чиркӳре, служба вӑхӑтӗнче, ретсем хушшине пытанса тӑрса, вулаттӑмӑр. Паллах, эпир, надзирательсен куҫӗ тӗлне пулас мар тесе, питех те асӑрханса вулаттӑмӑр.

Кӗнеке Иосифӑн уйӑрӑлми тусӗ пулса тӑчӗ, апат ҫинӗ вӑхӑтра та вӑл кӗнекине хӑйӗнчен хӑвармастчӗ.

Иосиф ыйтусене яланах хыпаланмасӑр ответлетчӗ. Унӑн пур енчен те ҫирӗплетсе ҫитернӗ ответ хатӗр пулсан—вӑл ответлетчӗ, ҫук пулсан—хӑшпӗр вӑхӑтчен ответа тытса тӑратчӗ.

Унчухне вӗрентнӗ предметсенчен Иосиф граждӑнла историе тата логикӑна юрататчӗ. Ҫак предметсемпе унӑн яланах пиллӗксем пулса. Ытти предметсемпе экзамен пама вӑл вӗренӳ ҫулӗ вӗҫӗнче хатӗрленетчӗ.

Тўсмелле мар пăчă сывлăшлă семинаринче пире питех те савăнтараканни юрăсемччĕ. Сосо пире хора явăçтарсан, хăйĕн янравлă та кăмăллă сассипе халăхăн юратнă юррисене юрласан, эпир калама çук хĕпĕртесе савăнаттăмăр.

*Г. И. Елисабедашвили*

## УЧИЛИЩĂРИ ÇУЛСЕМ

Эпĕ Сталин юлташа çамрăкранпах, Гори хулинчи духовнăй училище ученикĕ пулнăранпах, астăватăп, çак училищĕра эпĕ те вĕрентĕм. Вăл—чи чухăн тата чи пултаруллă учениксенчен пĕриччĕ.

Вăл мана вĕрентрĕ, семинарине кĕме хатĕрлерĕ. Революциллĕ юхăм ыйтăвĕсем çинчен каласа парса, мана вăл политикăллă кĕрешӳ тĕлĕшне те хатĕрлерĕ...

Вăл час-часах хресченсемпе тĕл пулса калаçатчĕ.

Çакнашкал вăхăта астăватăп.

Пĕррехинче, çулпа пынă чухне, эпир уйра канса ларакан сухаçăсене куртăмăр.

— Давай çавсем патне каяр,—терĕ Сталин юлташ.

Кайрăмăр.

Хресченсенчен пĕри çăкăрпа лобиона[1] çав тери пысăк аппетитпа çинине курсан, Сталин юлташ ыйтрĕ:

— Мĕншĕн çавăн пек начар апат çиетĕр? Вĕт эсир хăвăрах сухалатăр, акатăр, тыррине пухатăр. Апла пулсан, лайăхрах пурăнма пулать.

Çак ыйту çине хресчен çапла ответлерĕ:

— Тыррине хамăрах пухатпăр та, анчах приставне памалла, пупне памалла. Мĕн ĕнтĕ пире юлать?—терĕ.

Çапла пуçланса кайрĕ калаçу, калаçнă май Сталин юлташ—хресчен мĕншĕн чухăн пурăннине, хресчен вăйĕпе кам пуйнине, камсем унăн тусĕсем тата камсем унăн тăшманĕсем пулнине, утăм хыççăн утăм туса, ăнлантарса пама пуçларĕ. Вăл питех те ăнланмалла, питех те килĕшӳллĕ каларĕ, хресченсем ăна хăйсемпе калаçмашкăн тата та килме хушрĕç.

Семинаринче вĕреннĕ чухне, час-часах вăл хăйпе пĕрле вăрттăн литература илсе çӳретчĕ. Семинари инспекторĕ, монах Димит-

[1] Лобио—мăн мăйăр (пушкăрт мăйри) тĕшшинчен тунă çимĕç. (Ред.)

рий, Сталин юлташа мӗнле те пулин ҫак литературӑпа тытасшӑнччӗ. Анчах Сталин юлташ литературӑна питех те лайӑх усратчӗ, монах Димитрий ӑна нумай вӑхӑт хушши тытаймарӗ. Пӗррехинче, Сосо вӑрттӑн кӗнекене вуланӑ чухне, ун патне вӑл йӑпшӑнса пычӗ-пычех. Сосо аллинчи кӗнекене яштах ҫавӑрса тытрӗ, анчах Сосо ӑна ҫав самантрах каялла туртса илчӗ.

Монах Димитрий тӗлӗнсе ҫиленчӗ:

— Кампа ӗҫ пулнине-эсӗ курмастӑн-и мӗн? —терӗ вӑл.

Сосо куҫӗсене шӑлчӗ, ун ҫине тинкерсе пӑхрӗ те:

— Хамӑн умра хура паллӑ куратӑп, урӑх нимӗн те мар,—тесе ответлерӗ.

Сталин кӑтартса панипе тата ертсе пынипе эпир учениксен социал-демократла комитетне организацилерӗмӗр.

Ҫак комитет пӗрлештерсе тӑракан кружоксенче ҫӗр, ҫӗр ҫирӗмпилӗк ҫын шутланатчӗ. Вӗсем член укҫисем (уйӑхне вунӑ-ҫирӗм пус) тӳлесе манӑн урлӑ парти комитечӗ валли паратчӗҫ.

*П. Капанадзе*

# „МАНĂН ЛЕНИНА КУРМАЛЛА“

Гори хулинчи духовнăй училищăра хамăр вĕренсе пурăннă çулсене астăватăп.

Иосиф Джугашвили пăхма типшĕм, анчах вăл çирĕп ачаччĕ. Вăл пурнăçа юрататчĕ, юлташсемпе хутшăнма юрататчĕ: унăн таврашĕнче яланах юлташĕсемччĕ. Вăл хăйĕн тантăшĕсемпе нимĕнрен ытла мечкăлла (лапталла) тата „лахти“ тенĕ вăйя выляма юрататчĕ. Çак вăйăсем ученикесен юратнă вăййисемчĕ. Иосиф лайăх вылякансене суйласа илме пĕлетчĕ, çавăнпа та пирĕн ушкăн вăйăра яланах çĕнтеретчĕ.

Эпĕ Иосифпа пĕрле вунвиçĕ çул вĕрентĕм, учительре хам вăтăр пилĕк çул ĕçлетĕп, пĕтĕм çак çулсем хушшинче те Иосиф пек

пĕлекен тата пултаракан ученика эпĕ тĕл пулаймарăм.

Çав çулсенче училищăре пире рисованипе вĕрентмен пулсан та, Иосиф рисованине пит те лайăх тăватчĕ. Вăл ÿкернĕ Шота Руставели тата грузинсен ытти писателĕсен портречĕсене астăватăп.

Иосиф хăй вĕреннĕ вăхăтра Гори хулинчи библиотекăри кĕнекесене пурне те тенĕ пекех вуласа тухрĕ, ИгнатийНиношвили, Илья Чавчавадзе, Акакий Церетели т. ыт. çырнисене те вуласа тухрĕ. Чи лайăх произведенисене пире, хăйĕн юлташĕсене, вулама хушатчĕ, час-часах хăй вуланă кĕнекесен содержанийĕсене каласа паратчĕ. И. Ниношвили çырнă „Гогна Уишвили" ятлă калав, хресченсен пусмăр тата правасăр пурнăçне çутатса параканскер, Иосифа пит те килĕшнине астăватăп. „Хресченсене пулăшмашкăн,— тетчĕ Иосиф,— вĕренмелле, вĕренмелле".

Иосиф Джугашвили хăйне мăнаçа хуманнипе палăратчĕ, вăл лайăх тата сисĕмлĕ юлташчĕ. Вăл пирĕнтен нумай пĕлнĕ пулсан та, нихăçан та хăй нумай пĕлнипе мухтанмастчĕ. Вăл пирĕнтен пултаруллăрах пулнипе те мухтанмастчĕ, пачах урăхла, вăл пире хăйĕн пĕлĕвĕсемпе пулăшатчĕ, вăл

пире географи карттисем, задачăсем тума, уроксем хатĕрлеме пулăшатчĕ.

Иосиф çирĕп, маттур та харсăр ачаччĕ.

Çавăнпа пĕрлех юлташсемпе хутшăннă чухне вăл вĕсемшĕн тăрăшса пулăшатчĕ.

Вăл çакнашкал тăрăшни çинчен çак факт та пулин каласа парать.

Пĕрре темле, экзаменсем парас умĕн, эпĕ чирлерĕм те училище смотрителĕ Беляев патне мана экзаменсем парассинчен ирĕклетмешкĕн ыйтма кайрăм. Беляев эпĕ ыйтнипе килĕшмерĕ. Эпĕ питех те кӳрентĕм. Çакăн çинчен Сосо пĕлнĕ те мана хăйпе пĕрле Беляев патне каймашкăн ӳкĕтлеме пуçларĕ. Эпĕ çакăнтан нимĕн те тухас çуккине пĕлсе, кайма кирлĕ марри çинчен калама тытăнтăм. Сосо мана Беляев патне кайма ӳкĕте кĕртрĕ, кайсан вара мана ирĕклетме кирли çинчен смотрителе татăклăн, хăюллăн, çине тăрсах калама тытăнчĕ, смотритель вара ыйтнине турĕ.

Кайранхи çулсенче, Тифлисри семинаринче вĕреннĕ чухне, Сталин вăрттăн кружоксене хутшăнса ĕçлерĕ, кĕнекесене юратсах вулассине пăрахмарĕ. Вăл геологи вĕренчĕ, унтан хими вĕренме тытăнчĕ. Маркс çырнă кĕнекесене вулама пуçларĕ. Кружок организацилерĕ, ăна вăл хăй ертсе пычĕ. Вăл кружокра рабочисен юхăмĕ çинчен вĕрентĕмĕр,

çак май Сталин час-часах: рабочисем хушшинче ĕçлессине пуçламалла, тетчĕ.

Тифлисра, семинарире, Сталин ĕлĕкхи пекех хавас тата вашават юлташ пулчĕ. Анчах кунта унра улшăну пулчĕ пулас. Вăл шкулта вĕрентнĕ предметсене кăмăлласа вĕренмен. Занятисенчен ирĕк вăхăта пĕтĕмпех политикăллă литература вуласа ирттеретчĕ — марксизма, рабочисен юхăмĕн ыйтăвĕсене вĕренчĕ.

Пуринчен ытла пĕр паллă факта астăваттăп. Çакă вăл 1898 çулта пулчĕ. Пĕррехинче ир, чей ĕçнĕ хыççăн, эпĕ семинаринчен Пушкин скверне тухрăм. Кунта эпĕ Сталина куртăм, унăн йĕри-тавра юлташсем тăраççĕ, вĕсемпе вăл хаяр дискуссилерĕ, Жордания шухăшĕсене критиклерĕ[1]. Ку вара пурне те хавхалантарчĕ.

Çакăнта вара, садра, эпир пирвайхи хут Ленин çинчен илтрĕмĕр.

Звонок пачĕç, эпир урока каймашкăн хыпаланса саланма пуçларăмăр. Эпĕ, Жордания шухăшĕсене çивĕччĕн критикленине тĕлĕннĕскер, Иосиф патне пытăм. Иосиф

---

[1] Жордания — „Месаме-даси“ организацин пумайрахăш ушкăнĕн руководителĕ, кайрантарахпа Грузи меньшевикĕсен руководителĕ. Октябрьти пролетариллĕ революци хыççăн Грузири контрреволюци организаторĕ, хĕвеланăçри империалистсен агенчĕ.

мана Тулин (Ленин) статьисене вулани çинчен пĕлтерчĕ, вĕсем ăна питех те килĕшнĕ.

— Манăн, мĕн пулсан та, ăна курмаллах,— терĕ вăл мана унчухне.

Çак сăмахсене, 1898 çулта каланаскерсене, эпĕ Сталина 1926 çул ăна тĕл пулсан астутартăм, вăл вара çак эпизода астуса илчĕ.

# Тупмалли

Стр.

Д. Гогохия

Çак кунсем ĕмĕрлĕхех асăмра юлчĕç . . . . . . . . . . . . . . 3

Г. Глурджидзе

Манми çулсем . . . . . . . . . . . . . . 17

Г. И. Елисабедашвили

Училищăри çулсем . . . . . . . . . . 23

П. Капанадзе

„Манăн Ленина курмалла“ . . . . . . . . . 26

Ц. 1940 г.
Акт № 113
Вкладн л.

Отв. редактор К. Чулгась. Техред. Ф. Яковлев.

Поступило в производство 4/XII—39 г.
Подписано к печати 26/XII—39 г.
Уполн. Чувашглавлита № 1312, Заказ № 783.
Тираж 5.000 экз. Ст. ф. 6. 60x92 1/32. Объем 1 п. л.

Типография № 1 НКМП ЧАССР, г. Чебоксары,
ул. Володарского, 5. Дом печати.

Цена ~~50~~ коп.

3373

Н Чув.
1-108а

# ДЕТСКИЕ ГОДЫ
# ВОЖДЯ

ИЗ ВОСПОМИНАНИЙ СТАРЫХ РАБОЧИХ ЗАКАВКАЗЬЯ

На чувашском яз.

Госиздат Чуваш АССР
Чебоксары ◆ 1940